Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРЎШĔН

Шăматкун
2008 ç., нарăс, 9

13 -14
/9037 - 9038/№№

Хаçат 1932 çултанпа
тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

## НОМЕР ЦИТАТИ



Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕ Дмитрий МЕДВЕДЕВ:

«Чăваш Республики вĕрентӳ тата сывлăх сыхлавĕ енĕпе лидерсен шутне кĕрет, унăн мĕн кăтартмалли пур. Сăмах çак усăллă опыта ытти регионсем те хăйсем патĕнче вырăнти ĕç условийĕсене шута илсе усă курасси пирки пырать».

## Социаллă пурнăç аталанăвĕн задачисене сӳтсе явнă

Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕн çумĕ Дмитрий Медведев нарăсăн 4-мĕшĕнче приоритетлă наци проекчĕсене тата демографи политикине пурнăça кĕртес енĕпе Раççей Президенчĕ çумĕнче ĕçлекен Канаш Президиумĕн ларăвне иртернĕ.

Канаш Президиумĕн членĕсем вĕрентĕве тата сывлăх сыхлавне модернизацилес енĕпе йышăннă комплекслă проектсем регионсенче мĕнле пурнăça кĕрсе пынипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă. Ларăва уçнă май, вице-премьер вĕрентӳ тата сывлăх сыхлавĕ тĕлĕшĕпе пурнăçлакан проектсем регионсен социаллă пурнăçне аталантарас ĕçре пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăннине палăртнă. Вĕрентĕве модернизацилессипе çыхăннă комплекслă проектсене пурнăçланă май шкулсен пурлăх бази палăрмаллах лайăхланнă, вĕрентекенсен тупăшĕсем ӳснĕ, пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан учрежденисем хушшинче сывă конкуренци туса хумалла майсем çирĕплетнĕ.

Дмитрий Медведев çак тапхăрта вĕрентӳ пахалăхне тул енчен пăхса хакламалли тытăм туса хума кирли çинчен сĕнӳ панă. Раççейри кашни ача, вăл ăçта пурăннине пăхмасăр, хăйне кирлĕ пек паха пĕлӳ илме пултартăр.

Сывлăх сыхлавне модернизацилессипе ĕçленĕ май, палăртнă вице-премьер, ĕçлемен сынсене медицина пулăшăвĕ парасси, медицина ĕçченĕсене тӳлесси лайăхланнă.

Д. Медведев сывлăх сыхлавне финансилес çĕнĕ тытăма ĕçе кĕртнипе пĕрлех пурнăçламалли ытти задачăсене те палăртнă. Вĕсен шутĕнче – пахалăхлă медицина пулăшăвĕ памалли пĕрлехи стандартсемпе критерисем, медицина учрежденийĕсене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме çул уçса парасси.

## Проект нумай-нумай туриста илĕртĕ

**Тунтикун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров республика Правительствин членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.**

Шупашкарта хăвăрт утас енĕпе Тĕнче кубокĕн ăмăртăвĕсем иртнĕ вăхăтра Çĕнтерӳ кунне халалланă уяв мероприятийĕсем те пулĕç. Республика пуçлăхĕ унта спорт делегацийĕсен представителĕсем те йышлă хутшăнассине пĕлтернĕ. Çавна май Сергей Гапликов премьер-министра уяв программине пуянрах тума хушусем панă.

Çав вăхăтрах Чăваш Ен тĕп хулинче салютсен тата фейерверксен виçĕ кунлăх фестивальне ирттерме палăртнă. Кунашкал фестиваль Шупашкарта пĕрремĕш хут иртĕ. Николай Федоров палăртнă тăрăх, вăл пĕрмаях пуласси питĕ пĕлтерĕшлĕ: «Çак проект чăваш çĕрĕ çине тата нумай-нумай туриста илĕртĕ».

2008 çулăн пĕрремĕш уйăхĕ финанс тĕлĕшĕнчен ыррине шантарать. Федераци налук службин Чăваш Республикинчи управленийĕн ертӳçи Аркадий Дергачев малтанхи кăтартусем тăрăх кăрлачра пур шайри бюджетра тата бюджет тулашĕнчи фондсенче 2 миллиард та 671 миллион тенкĕ пухăннине пĕлтернĕ. Çав шутра республика бюджетне 563,36 миллион тенкĕ кĕнĕ. Çакă палăртнин 108,7 процентчĕ, иртнĕ çулхи кăрлач уйăхĕн шайĕнчен 39 процент нумайрах. Малтан шутланă пекех лайăх динамика палăрать, тенĕ Аркадий Дергачев.

Пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Алла Стальская пĕлтернĕ тăрăх, 2008 çулхи нарăс уйăхĕн 4-мĕшĕнчен республикăри район-хулара вырăнти объектсем хирти условисенче ăçта вырнаçнине палăртмалли ĕçсем (вырăнти объектсене геодези хатĕрĕсемпе ӳкересси) пуçланаççĕ. Çак ĕçсене Чăваш Республикин районĕсенчи ялсен электрон карттине тăвас тĕллевпе конкурсра çĕнтернĕ ятарлă организаци – «Меридиан +» аэрогеодези наукăпа производство предприятийĕ тулли мар яваплă общество (Мускав хули) пурнăçлĕ.

Иртнĕ çул республикăра сывлăшра ӳкерӳ ĕçĕсем ирттернĕ. Çавна май муниципалитет пĕрлĕхĕсен ортофотопланне хатĕрлеме май килнĕ. Халĕ çак материалăн электрон версине хатĕрлеççĕ.

Электрон карттисемпе çĕр мониторингне тытса пырас, ял хуçалăхĕнче усă куракан çĕрсен территори çĕр йĕркелĕвне хатĕрлес ĕçре патшалăх влаçĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем усă курĕç. Унашкал карттăсем пур шайри администраци пайланăвĕн объекчĕсене, урамсене, ял-хуласене кĕрекен çулсене, муниципалитетсен район территорийĕсенчи автоçул тытăмĕсене, рельеф объекчĕсене, гидрографи тата гидротехника сооруженийĕсене, промышленноç тата инженери, социаллă инфратытăмăн тата чукун çул тытăмĕн объекчĕсене кăтартакан тĕп материал пулса тăраççĕ.

Алла Стальская çӳлерех асăннă ĕçсене вăхăтра тата пахалăхлă пурнăçлас тесен «Меридиан +» аэрогеодези наукăпа производство предприятийĕн представителĕсене вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен кирлĕ пулăшупа тивĕçтермелле, тенĕ.

*ЧР Президент Администрацийĕн пресс-службы.*



**Çĕнĕ çула кĕнĕренпе пĕр уйăх иртрĕ ĕнтĕ. Йĕпреçсем чăваш халăхĕн тĕп уявĕ – Республика кунĕ çитессе тӳсĕмсĕррĕн кĕтеççĕ. Çак уяв вăл – тăван тăрăх сăн-сăпатне улăштаракан, унăн аталанăвне çĕнĕ вăй кӳрекен, эпир, йĕпреçсем ĕçчен те тараватлă кăна мар, тĕллевсем патне талпăнакан, ыттисемпе тупăшма пултарнине кăтартса паракан уяв. Уяв умĕнхи ĕç-хĕлпе район пуçлăхĕ Анатолий ПЕТРОВ райхаçатра пичетленекен çак интервьюра паллаштарать.**

# Республика кунне тăрăшсах хатĕрленетпĕр

***– Праçникчен вăхăт нумай юлмарĕ. Анатолий Иванович, Республика кунне хатĕрленесси мĕнлерех пырать?***

– Ĕç хĕрсех пырать темелле. Уява кĕтсе илме хатĕрленес енĕпе ятарлă план тунă, ăна республикăра ырласа йышăнчĕç. Çав плана пурнăça кĕртме ял тăрăхĕсем пуçăннă та. Йĕркелӳ комитечĕ кашни шăматкунах канашлу ирттерет, тунтикунсенче вара ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен тунă ĕç-хĕл пирки отчет итлетпĕр. Предприятисемпе организацисем те айккинче тăмаççĕ. Ĕç мĕнлерех пынине республика тĕрĕслесех тăрать. Акă кăрлачăн 29-мĕшĕнче Республика кунне хатĕрленсе ирттерекен йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче, ăна Сергей Гапликов премьер-министр ертсе пычĕ, эпĕ ку таранччен тунă ĕçсем çинчен каласа патăм.

***– Республика кунне хăйсем патĕнче ирттернĕ районсемпе хуласенче çав тери палăрăмлă улшăнусем пулчĕç: вĕсен сăн-сăпачĕ, обществăлла инфратытăм çĕнелчĕç. Пирĕн Йĕпреç мĕнлерех пулĕ-ши?***

– Районта пурăнакан кашни çын кулленех пурнăçламалли ĕç, чăнах та, питĕ нумай. Республика кунĕ тĕлне Çиçĕмкасси, Алшик, Туçа, Кăшмас Туçа, Кушакпуç, Энтриел (магазин патне) ялĕсене асфальт сарнă çулпа çыхăнтараççĕ. Канашпа Вăрнар районĕсем енчи республикăпа пĕлтерĕшлĕ çулсене 13 çухрăм тăршшĕ тĕпренех юсатпăр. Йĕпреç поселокĕнчи Мересьев, Энгельс, Илларионов, Пионер урамĕсенчи çулсем те çĕнелеççĕ. Автовокзалтан пуçласа Энгельс урамĕн тăваткалне çитиччен çула анлăлатаççĕ, автостанцине «Патвар» физкультурăпа спорт комплексĕ хушшинче бордюрлă тротуар пулать. Спорт комплексĕ умĕнчи лапам та çĕнĕ сăн илĕ: кунта автобуссем валли 2 пин тăваткал метр чухлĕ ятарлă вырăн тăваççĕ, фонтан тапса тăма пуçлĕ, вăл йĕпреçсен килĕсене тап-таса шыв пырса тăнине пĕтĕмлетекен символ пулса тăрĕ. Водовода тăвас ĕç, пĕлетĕр ĕнтĕ, вĕçленсе пырать. Çавăн пекех Хурашыв урлă хывнă кĕпере те чылай анлăлатма тата тĕреклетме пăхнă.

Йĕпреç поселокĕнчи чукун çул станцийĕ те пирĕн пата килекен нумай-нумай хăнасене çĕнĕ сăнсăпатпа кĕтсе илĕ. Вокзал кăна мар, ун тавраш те пĕтĕмпех çĕнелĕ. «Раççей чукун çулĕсем» АУО çак тĕллевпе 28 миллион тенкĕ укçа уйăрать «Чĕкеç» хăна çурчĕн, Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкул, çул-йĕр управленийĕн, район администрацийĕн, Йĕпреç поселокĕнчи Культура çурчĕн, «Волгателеком» АУОн, «Раççей почтин», автозаправка станцийĕн, ытти организацисемпе предприятисен территорийĕсемпе вĕсен таврашĕнчи çуртсен умĕсем (фасачĕсем) çĕнелĕç. Сăмах май каласан, тирпей-илем кӳрессипе çыхăннă пур мероприятисене те районти дизайн енĕпе ĕçлекен канаш туса хатĕрленĕ.

«Чăвашэнерго» АУОн вăйĕпе Энгельс тата Маресьев урамĕсенчи электропередачăсен линийĕсене улăштараççĕ тата светильниксем вырнаçтараççĕ, «Стройкомплект» ООО строителĕсем 31 хваттерлĕ пурăнмалли çурта туса пĕтерсе ĕçе кĕртеççĕ, унта офис пӳлĕмĕсем те пулаççĕ.

Йĕпреç поселокне социаллă пĕлтерĕшлĕ баннерсем илем кӳрĕç. Ял тăрăхĕсен чиккисенче аншлагсем вырнаçтарăпăр.

Тирпей-илем кӳрессипе çыхăннă тĕп ĕçсене, куратăр ĕнтĕ, район вăйĕпе кăна мар, республикăри куçарса паракан укçа-тенкĕпе тăваççĕ.

***– Тирпей-илем кӳрессипе çыхăннă ĕçсен калăпăшĕ пысăк. Культура программи мĕнлерехши? Йĕпреç районĕ мĕнпе уйрăлса тăрĕ?***

– Халăх пултарулăхĕпе: тăван чĕлхе мăнаçлăхĕпе, ентешĕмĕрсен традицийĕсемпе, йăли-йĕркисемпе, культура еткерлĕхĕн уйрăмлăхĕсемпе.

/Вĕçĕ 2-мĕш стр./.



Флеш-карта 1 Gb

ПОДАРОК — ПРИ ПОКУПКЕ КОМПЬЮТЕРА

НИ
КОМПЬЮ
СУПЕРМ

п. Ибреси, ул. Садовая, д. 7 /Дом быта/, 1 этаж, телефон: 2-22-62.
КРЕДИТ
www.nix.ru

# Профсоюзсем Д. Медведев кандидатурине ырлаççĕ

**– Социаллă сферăпа ĕç тытăмĕнче профсоюз патшалăхăн тĕп партнерĕ шутланать, – тенĕ Раççей Федерацийĕн пĕрремĕш вице-премьерĕ Дмитрий Медведев Раççей Никама пăхăнман профсоюзĕсен федерацийĕн Генеральнăй Канашĕн ларăвĕнче.**

Хăйĕн сăмахĕсене çирĕплетсе вăл профсоюзсем, ĕç паракансем тата правительство пĕлтĕр 2008-2010 çулсем валли ală пуснă виçĕ енлĕ Генеральнăй килĕшӳ пирки аса илтерчĕ. Пĕрремĕш хут хирĕçӳсĕр калаçса татăлма май килнĕ, çакă енсем пĕр-пĕрне ăнланса тата килĕштерсе ĕçлеме хатĕррине çирĕплетет. Дмитрий Медведев çавăн пекех профсоюзсен паянхи, вунă çуллăх малашлăха çĕршывăн социаллă аталанăвне тĕпе хуракан патшалăхăн стратеги планĕсене йĕркелекен тапхăрти пĕлтерĕшне палăртнă.

– Тĕпрен илсен çын сывлăхне çирĕплетессишĕн, унăн пĕлĕвне ӳстерессишĕн, пурнăç пахалăхне тата ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн, конкурентлăха çирĕплетессишĕн е, кĕскен каласан, Раççейре пурăнакан мĕн пур халăхăн пурнăçне аталантарассишĕн тăрăшакан социаллă уçлăх йĕркелемелле, – тенĕ пĕрремĕш вице-премьер.

Çак уçлăхăн никĕсне паянах хывма пуçланă ĕнтĕ. Генеральнăй килĕшӳре çирĕплетсе хăварнине пурнăçласа енсен ĕç тӳлевĕн çĕнĕ меслечĕсене туса хатĕрлемелле. Пенси малалла ӳсĕ, çитес çулсенче унăн виçи икĕ хут хăпарĕ. Çакна валли патшалăхпа ĕç паракан пенси капиталне йĕркелес енĕпе ĕçлеççĕ. Шалу та ӳсĕ, чи пĕчĕк ĕç укçи ĕçлеме пултаракан халăха пурăнма кирлĕ виçепе танлашĕ, тенĕ Дмитрий Медведев.

– Раççей гражданинĕн пурнăç шайĕ, наци пуянлăхĕ тухăçлă ĕçрен нумай килет, – тет Д. Медведев. Пирĕн çĕршывра ĕç тухăçлăхне мĕнле ӳстерме пулать-ха? Медведев шухăшĕпе, чи малтан ĕç условине (производствăна техникăпа тивĕçтернин шайне тĕпе хурса), тӳлеве, миграцие т. ыт. те шута илсе халăха ĕçпе тивĕçтерессин тата ĕç укçин çĕнĕ меслечĕсене туса хатĕрлемелле.

Тĕрлĕ отрасль профсоюзĕсен представителĕсем РФ пĕрремĕш вице-премьерĕпе тата РФ Президенчĕн кандидачĕпе Д. Медведевпа тĕл пулса чылай ыйтăва сӳтсе яврĕç. Профсоюз лидерĕсем хальхи Президентăн еткерçи вĕсене итленине кăна мар, пулăшма та хатĕррине хăйсем курса ĕненнĕ. Çавна май Генеральнăй Канаш 2008 çулхи пуш уйăхĕн 2-мĕшĕнче иртекен РФ Президенчĕн суйлавĕнче Дмитрий Медведев кандидатурине ырлама йышăннă.

***«Хыпар» хаçатран.***

# Республика кунне тăрăшсах хатĕрленетпĕр



/Вĕçĕ. Пуç.1-мĕш стр./.

Пучинке ялĕ çывăхĕнче, «Красный партизан» колхоз çĕрĕ çинче, «Камай уйĕ» тесе ят панă вырăнта кăçалхипе вунпĕрмĕш хут «Камай уйĕн урхамахĕсем» хресчен лашисен турнирĕ иртĕ. Ку мероприяти йăлана кĕрсе çирĕпленнĕ ĕнтĕ, унăн программине юлан утсемпе ăмăртса чупассипе пĕрлех йывăрăша инçерех куçарассипе çыхăннă тупăшусене те кĕртнĕ. Ут ĕçне юратакансем хăйсен пĕлĕвĕсене теорире те, практикăра та тĕрĕслĕç, лашана хăвăрт тата тĕрĕс кӳлессипе ăмăртĕç, сухапуç тытса курĕç. Кăмăл пур-тăк, урхамах туянма та май пулĕ, мĕншĕн тесен унтах сутуилӳ йĕркеленĕ.

Республикăри ял тăрăхĕсен командисен спартакиади те (пĕрремĕшĕ те пирĕн районтах иртнĕччĕ) кăтартуллăн иртĕ. Ăмăртусен программинче спортăн йăлана кĕнĕ тата йăлана кĕмен енĕсем (хапха урлă кире пуканне ывăтасси, пĕрене çинче михĕсемпе çапăçасси, хăйăр миххине çĕклесси, тулли лава вырăнтан куçарасси, тулли витресем çакнă кĕвентепе чупасси (хĕрарăмсем), шыври пĕрене çинче ишесси, «Кĕрешӳ» наци кĕрешĕвĕ, лапта т. ыт. те).

Уяв хăнисене «Пăлхар çĕрĕн историйĕ» ятпа иртерекен курав та кăмăла каясса шанас килет, унта авалтан упранса юлнă юрăсемпе ташăсем, çипуç, наци тĕрри-эрешĕсемпе пир-авăр тĕп вырăнта пулĕç.

Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче çав мероприятисем район центрĕнче тата ял тăрăхĕсенче иртĕç. Культура тата спорт программисемпе пăхнă мероприятисене культурăпа кану паркĕнче, уçă тӳпе айĕнчи музейра, тĕп стадионта тата Спорт керменӗнче вырăн парĕç.

Пĕтĕмлетерех каласан нумай-нумай хăнасене, çав шутра Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен килекенсене йышăнакан уяв чăн-чăн праçнике çаврĕнĕ.

***– Çак уява районта пурăнакан пĕтĕм халăхпа хатĕрленсе кĕтсе илнин пĕлтерĕшĕ пысăк.***

– Çапла. Эпĕ хам тахçанах каланă шухăша тепĕр хут калассинчен ку хутĕнче те пăрăнмастăп: пирĕн республикăра çакăн пек йĕрке çирĕпленнĕ: кам çанă тавăрса ĕçлет, çавна кăна пулăшаççĕ. Паллах, хула тата ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, предприятисемпе организацисен ертӳçисем, район администрацийĕ çине пысăк яваплăх тиенет. Анчах та ĕçсен пысăкрах пайĕ кашни çын çак тивĕçе мĕнлерех ăнланса йышăннипе çыхăннă. Енчен те хамăр пурăнакан çуртра, урамра, ялта йĕркесĕрлĕх: пур çĕрте те тенĕ пекех çӳп-çап, вутă, ăпăр-тапăр, çумкурăк, чалăшса кайнă картасем, тирпейсĕр палисадниксемпе çурт умĕсенче «тӳнтерле» тĕслĕхсем хуçаланаççĕ пулсан, пирĕн пĕтĕм тăрăшулăх сая кайма пултарать.

Республика кунне тивĕçлипе хатĕрленсе кĕтсе илессе эпĕ шанатăп. Эпир тунă тата пуçарнă мĕнпур ĕçсем пирĕн пурнăçа тата та пуянрах, телейлĕрех тума пулăшĕç.

***Калаçăва Эмилия ЕФРЕМОВА çырса илнĕ.***




**ӲКЕРЧĔКСЕНЧЕ:** *Йĕпреç станцийĕн вокзалĕ таврашĕнчи лапамăн генеральнăй планĕн эскизĕ; Генеральнăй плана «Раççей чукун çулĕсем» ОАО архитекторĕсемпе пĕрле сӳтсе яваççĕ.*

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

ветерана здравоохранения, добрую, внимательную, отзывчивую женщину – **ПОПОВУ Марию Митрофановну** с 80-летним юбилеем. Желаем крепкого здоровья, долгих лет жизни в окружении любимых детей и внуков.

Желаем новых сил, здоровья,
Дома, что согрет любовью!
Замечательных подруг, друзей,
Новых планов, мечт, идей.
Потрясающих успехов,
Счастья, радости и смеха,
Сердца юного в груди,
Долгой жизни впереди!

***С уважением НАУМУШКИНЫ, АЛИМОВЫ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Пурнăç çулĕпе пĕрле утакан савнă мăшăра, юратнă аннене, мăнукĕсене кучченеç-парнесемпе савăнтарсах тăракан кукамая – Вăтаелĕнчи **Агния Петровна НИКОЛАЕВАНА** – пĕтĕм чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе 50 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Юбилей кĕрекинче тăван-пĕтенсемпе, кӳршĕ-аршăсемпе пĕрле пуçтарăнса кăмăл туличчен савăнма, çепĕç юрăсемпе, илемлĕ ташăсемпе чуна йăпатма сунатпăр.

Юратнă мăшăр, анне, кукамай,
Сана тав туса саламлатпăр йышпа.
Эс пул пирĕнпе юнашар пĕрехмай,
100 çул пурăнма сана тухтăр шăпа.
Ыр çыннăмăр, ан ватăл нихçан,
Чăн-чăн телей вăл – эс пурри!
Юхса шăрантăр яланах тасан
Хуйха-суйха пĕлмен чĕре юрри.

***МĂШĂРĔ, ЫВĂЛĔ, ХĔРĔПЕ КĔРӲШĔ, МĂНУКĔСЕМ.***

х х х

Пирĕн хаклă ĕçтешĕмĕр, хисеплĕ çыннăмăр – Вăтаелĕнче пурăнакан, колхоз бухгалтерийĕнче вăй хуракан **Агния Петровна НИКОЛАЕВА** – чаплă юбилей кĕтсе илет, 50 çул тултарать. Çак паллă кун ячĕпе эпир ăна чунтан-вартан юратса хĕрӳллĕн саламлатпăр. Халăх хушшинче, ял çинче ялан хисеплĕ пулма, çемье ăшшине тасан упрама тата ĕçре ăнăçуллăн тăрăшма юман пек çирĕп сывлăх, çăлкуç пек тапса тăракан çĕнĕ вăй-хал тата иксĕлми ăшпиллĕх сунатпăр.

Ялан эс пул, ялан эс кул,
Пурнăç тĕллевĕн çути пул.
Малтан мала утса пыма –
Пире телей санпа пулма.

***ПĔРЛЕ ĔÇЛЕКЕНСЕМ.***

**х х х**

Çулсем иртеççĕ сисĕнмесĕр...
Тăванăм, уншăн ан кулян.
Ыр кăмăлушăн тав тăватпăр,
Пулсамччĕ пирĕнпе ялан.

Çакăн пек ăшă сăмахсемпе эпир юратнă хĕрĕме, аппана, мăнаккана, пысăк аннене, кукамая – Хурамалта пурăнакан **Раиса Геннадьевна ВАСИЛЬЕВАНА** – чаплă юбилей ячĕпе хĕвел пек хĕрӳлĕхпе, ытарайми çепĕçлĕхпе тулнă салам яратпăр. Таса ăраскал, çемьере килĕшӳпе юрату, телейлĕ кун-çул сунатпăр. Çавăн пекех унăн хĕрне – **Людмила Георгиевна Андреевана** – чун-чĕререн юратса, ăшшăн ыталаса 25 çул тултарнă ятпа саламлатпăр.

Юбилей ячĕпе саламлатпăр сире,
Çутă кулă кăна илемлеттĕр пите.
Таса сывлăхлă пулăр,
Ĕмĕр савăккăн кулăр,
Пултăр çут телейлĕ сирĕн çул.

***АМĂШĔ, КУКАМĂШĔ, СЕМЕНОВСЕН ÇЕМЙИ.***

**х х х**

Пирĕн юратнă çыннăмăр – хаклă хĕрĕмĕр, аппа, йăмăк, савнă мăшăр, анне – Чăваш Тимешри **Лариса Ивановна АНТОНОВА** – çак тапхăрта хăйĕн 35 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çак ятпа эпир ăна чĕре çумне хыттăн-хыттăн çупăрласа, чи çепĕç те ăшă сăмахсем каласа саламлатпăр. Вăрăм та çутă ăраскаллă ĕмĕр пурăнма телейлĕ кун-çул, савăк кăмăлтуйăм, иксĕлми юратупа çирĕп шанчăк, таса сывлăх сунатпăр. Чечек пек хитре сăну нихăçан та ан тĕксĕмлентĕр, питре ялан хĕвел кулли çиççе тăтăр.



Çамрăклансах пыр ялан,
Ĕмĕр вăрăм пултăр сан.
Пул чĕкеç пек çепĕç чунлă,
Пуринчен те ыр кăмăллă.

***АШШĔПЕ АМĂШĔ, ПИЧЧĔШĔ, 2 ЙĂМĂКĔ, ИНКĔШĔСЕМ, ЙЫСНĂШĔСЕМ, МĂШĂРĔ, ÇЫВĂХ ТĂВАНĔСЕМ.***

**х х х**



Хамăрăн çывăхран та çывăх çыннăмăра, мăшăра, пĕрле хурăнташла пурăнакан тăванăмăра, хресна аннене – Ирçе Çармăс ялĕнче пурăнакан **Мария Сергеевна САВИНАНА** – 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм та çутă ăраскаллă ĕмĕр пурăнма çирĕп сывлăх, çĕнĕрен те çĕнĕ вăй-хал, савăк кăмăл, çителĕклĕ пурнăç, тивлетлĕ кун-çул сунатпăр.

Пурнăç çулĕ такăр пултăр,
Ан хавшатăр сывлăху.
Тулăх кĕр пек пуянлантăр
Ырăпа сан кăмăлу.

***МĂШĂРĔ, ЯКОВЛЕВСЕН, ПЕРЕПЕЛКИНСЕН çемйисем, çывăх тăванĕсем.***

2008 Год добрых дел

# Книги от Единой России

**Чувашское региональное отделение партии в Год добрых дел, объявленный в республике, продолжает акцию «Книги - от Единой России», стартовавшую в прошлом году.**

В Год ребенка члены и сторонники «Единой России» в городах и районах республики передали в школьные и сельские библиотеки свыше 11,5 тысяч книг. Это художественная и детская, научно-техническая литература, учебники, врученные на торжественных мероприятиях, посвященных Дню знаний. Активное участие в сборе книг приняли депутаты Госсовета и местных Собраний от «Единой России», трудовые коллективы.

В этом году акция продолжается. Сбор книг для лечебно-профилактических учреждений республики организован в региональном и местных отделениях партии, в общественных приемных депутатов «Единой России».

Приглашаем всех жителей Чувашии присоединиться к акции. Спешите делать добро!

В Чебоксарах книги для библиотек лечебно-профилактических учреждений можно принести по адресу: ул. Ленинградская, 32 (ДК им. Ухсая), каб. 108, тел. для справок: 62-25-56, 62-28-07.

# Программа добрых дел в школе

Волны демократических преобразований в стране за последние годы принесли много положительного. Но благодаря этим же преобразованиям из различных информационных средств посыпалось много грязи. Сюда можно включить и рекламу, и некоторые телевизионные программы, толкающие подростков на безнравственные поступки. Ведь не только ребенок, но и взрослый человек верит печатному слову. А как не верить Интернет-сообщениям, «новостям» телеканалов, которые преподносят отрицательные проявления в поступках людей как идеальные. Молодой, неокрепший, но считающий себя уже взрослым подросток, каждый день видит, как герои фильмов круто плюются, матерятся, дерутся, пьют и не пьянеют, курят и не болеют. Смотрят на «голых и смешных» и не понимают, что это не смешно, а похабно! Смех добродушный, радостный начинает исчезать, на смену ему приходит американский агрессивный хохот. Не замечали ли вы, что наши дети радуются тогда, когда другим худо? А ведь не кому-то, а нам и только нам плохо от этого.

Ростки агрессивности, негативных поступков появились и среди учащихся школы в деревне Чувашские Тимяши. Хотя были только единичные случаи, педагогический коллектив понял серьезность положения. Педагоги решили, что родителям и детям не справиться с таким потоком информационной грязи без участия учителей. И претворился в жизнь план двухнедельных мероприятий. Огромный труд в это вложила и администрация, и учителя, родители и их дети.

Так родилась программа добрых дел в школе. Родители учащихся 5 «б» класса (классный руководитель – Егорова Л. П.) обсудили проблему, которой дали название «О наших трудных детях». Классная руководительница 5 «а» класса Алина Флегонтовна Кириллова провела вместе с детьми беседу на тему «О воспитании вежливости». Это мероприятие вышло далеко за границы простых бесед. Задушевный разговор о том, как сохранить «честь смолоду», удался на славу. Завершилось мероприятие выступлением детского коллектива.

Михайлова Елена Васильевна вместе с 6 классом подготовила целую программу: «О нравственном воспитании детей». Вопрос «О влиянии пива на детский организм» вынесли на обсуждение седьмые классы во главе с Евдокимовой Н. А.

Светлана Мефодьевна Васильева выбрала тему близкую и детям, и взрослым: «О детском одиночестве». После мероприятия восьмиклассникам стали понятны переживания родителей, а родители поняли то, что их дети взрослеют. Им нужна не только материальная забота, но еще и душевные беседы понимание. Мать должна стать верной подругой дочери, отец – другом сына, и наоборот.

Родителям девятиклассников пришлось столкнуться со сложной задачей: найти пути решения конфликтов с подростками. Лариса Григорьевна Хуснетдинова смогла сплотить коллективы и учащихся, и родителей, так, что мероприятие вызвало положительные эмоции. Разговор «Об ошибках семейного воспитания» затеяла Галина Андреевна Зотикова с родителями десятиклассников. Вопрос, конечно, сложный. Ведь нынешнее поколение знает, как нужно их воспитывать, а родителям и невдомек про эти знания. Нудные нотации надоедают детям. Ведь они считают себя умнее, взрослее взрослых. А может стоит прислушаться и к такому мнению своих чад и использовать его на благо воспитания...

Михайлов Александр Меркурьевич с одиннадцатиклассниками выбрал тему: «О законах и правонарушениях». Это серьезная проблема. Ведь выпускникам вскоре предстоит самостоятельная дорога в жизнь. А там нужно будет знать, где кончаются шалости, а где – правонарушения. Потому что незнание закона не освобождает от ответственности...

Двухнедельник прошел успешно, с пользой. Но на этом противостояние добра и зла не завершилось. Детям постоянно придется самим принимать правильные решения, так как жизнь часто ставит перед нами сложные задачи. Учат, говорят, показывают одно, поступают – по-другому. Оказывается, жить надо по совести. Педколлектив, родители хотят быть уверенными в своих детях. Надеемся и они постоянно будут помнить о чести и достоинстве, будут помнить тех, кто любит и возлагает на них большие надежды.

***Н. ЧУГАРОВА, заместитель директора по внеклассной работе Чуваштимяшской СОШ.***

# Служба для народа

Были времена, когда в милицию шли служить люди, чувствовавшие в себе призвание быть блюстителями правопорядка. Тогда и не было стимула: зарплата невысокая, а работать приходится на износ (продолжительность рабочего времени – 40 часов в неделю, нет ни выходных, ни праздников, а еще – ночные дежурства). Сейчас положение улучшилось. С 1 января 2006 г. уровень денежного довольствия работников правоохранительных органов возрос на 40 процентов и составил порядка 10,8 тыс. рублей для офицерского состава, 7,3 тыс. рублей – для рядового состава. А с 1 января 2007 г. повысился должностной оклад всем сотрудникам ОВД на 15%. К тому же работникам милиции предоставляются льготы: нуждающимся в улучшении жилищных условий – жилая площадь в виде отдельной квартиры или дома (причем участковым уполномоченным милиции – не позднее 6 месяцев с момента вступления в должность), бесплатный проезд на общественных видах транспорта по Чувашской Республике, по России – на основании единого проездного билета и др.

В настоящее время в ОВД по Ибресинскому району имеются вакансии на должности участковых уполномоченных. В связи с этим, приглашаем молодых людей, имеющих высшее или среднеспециальное юридическое образование, к нам на службу.

Если вы хотите посвятить себя служению общественным интересам, быть на страже правопорядка, обращайтесь в отдел кадров ОВД по Ибресинскому району по адресу: п. Ибреси, ул. Комсомольская, д. 19, каб. 5, тел.: 2-16-51.

***А. АЛЕКСАНДРОВ, помощник начальника ОВД по Ибресинскому району по кадрам, капитан милиции.***

НАШИ КОНСУЛЬТАЦИИ

# Товарищество собственников жилья. ЧТО ЭТО ТАКОЕ И ДЛЯ ЧЕГО ОНО СОЗДАЕТСЯ!

**Администрация Ибресинского района сообщает о новом способе управления многоквартирными домами – товариществе собственников жилья (ТСЖ).**

Почти все мы стали собственниками чего-либо, и очень многие – собственниками жилья, в котором проживаем. Это дает нам ощущение значимости, некоторой защищенности от превратностей жизни, широкие права распоряжения обретенным. Ведь, согласитесь, сложно назвать нормальной жизнь, когда человек не обеспечен самым основным: водой, газом, теплом, электричеством. Причем круглосуточно и бесперебойно. Это – государственные стандарты, они утверждены законодательно. Правда, в реальности все получается не так радужно: то свет «вырубится», то с подачей воды проблемы. А оперативность сантехников или электриков оставляет желать лучшего. И чем дальше, тем больше мы будем это осознавать. Но каждому в одиночку справиться с этим невозможно. Нужно объединяться.

В части жилой собственности максимально удобным из существующих вариантов является Товарищество собственников жилья – ТСЖ. Товарищество создается для совместного управления и обеспечения эксплуатации комплекса недвижимого имущества (домовладения).

В сферу деятельности ТСЖ входит:

– управление обслуживанием, эксплуатацией и ремонтом недвижимого имущества в домовладении;

– строительство дополнительных помещений и объектов общего имущества в домовладении;

– обеспечение домовладельцев коммунальными и прочими услугами;

– защита и представление общих интересов домовладельцев в государственных органах власти и управления, органах местного самоуправления, судах, а также во взаимоотношениях с иными юридическими лицами и гражданами;

– проведение мероприятий по благоустройству и озеленению придомовой территории;

– представление интересов Товарищества в качестве истца и ответчика в судах.

Членами Товарищества являются домовладельцы – собственники помещений (жилых и нежилых) в домовладении. Члены товарищества имеют право участвовать в деятельности Товарищества как лично, так и вносить предложения по совершенствованию деятельности Товарищества, устранению недостатков в работе органов управления.

Вступив в ТСЖ, вы повысите и свой статус собственника, став полноправным хозяином вашей общей собственности. Вы сможете сами выбирать себе управляющую компанию, четко отслеживать, куда и как тратятся ваши коммунальные платежи. И, самое главное, у вас появляется возможность получения дотаций на содержание дома и средств для его текущего или капитального ремонта, так как в Федеральном законе Российской Федерации от 21 июля 2007 г. №185-ФЗ «О Фонде содействия реформированию жилищно-коммунального хозяйства» четко прописано «Фонд предоставляет финансовую поддержку за счет своих средств на проведение капитального ремонта многоквартирных домов, переселение граждан из аварийного жилищного фонда при условии деятельности на территории муниципального образования (территориях субъектов Российской Федерации – городов федерального значения Москвы и Санкт-Петербурга), претендующего на предоставление финансовой поддержки за счет средств Фонда, организаций, осуществляющих управление многоквартирными домами и оказание услуг по содержанию и ремонту общего имущества в многоквартирных домах».

